**«Çавалӑмӑр, çаранӑмӑр…»**

Çавалӑмӑр, çаранӑмӑр,
вӑрман хӗрри Вӑрнарӑмӑр,
çутӑ тӗнчен вӑта çӗрӗ,
сӗткен паран тымарӑмӑр!

Яш чухнехи вӑкӑр сӗчӗ,
тӗнче тавра çавӑратӑн.
Ватӑлӑхри кӑкӑр сӗчӗ,
тӑван çӗре тавӑратӑн.

Тӗлӗксенчи асилӳсем
куç уçсанах çухалаççӗ,
масар çинчи мӑн ватӑсем
хӑйсен патне йыхӑраççӗ.

Анваскӑр-ха, аннем-аттем,
тата кӑштах пурнасчӗ-ха;
ӗмӗтрисем, çырмаллисем
пӗтменччӗ-ха, нумайччӗ-ха...
*1996*

*Эртиван, С. «Çавалӑмӑр, çаранӑмӑр…» : [сӑвӑ] / С. Эртиван // Чӑваш литературин антологийӗ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 495.*